**Станислав Сатур**

**Халăх**

*Г.Н.Волкова*

КАЛаçакан çын йăхĕ – ХАЛăх
ХАЛăх – вăл ХАЛай
кунта пур Сăнлăх Сăмахсем
тата Ăс-Хакăл Тăн –
кунçул
парать Ăс-Хакăл/ –
тата пĕлмен япаласене
сив хупăрлавĕ-тĕр
/çамка çинчи кашни
çĕн пĕркеленчĕк евĕрлех/
ютран килсе вырнаçнă йышăн
Тим-Шыравĕпе
пĕрле
куллен пăтрашăнать! –
/кунта ХАЛай кĕрлет
пĕрмай нихçан вĕçленмесле
тĕп ХАЛăх шавĕ пек/!.. –
пурнатпăр
Ăслă-Тăнлă-Пуçлă-Этемле
пиртен кашни
ытти чĕрчунсенчен
расна тăрать
тăнпа ХАЛаплама туса хума
пĕлнипеле
/кунта та
ХАЛ-Сăмах

тĕнчи/

этемлĕхĕн чĕлхи – Вăй ХАЛ пулса

вăраннăскер

/чăн малтанхи!/ –

Чăваш чĕлхи пекех

юл ĕмĕр

ХАЛăхăм-ХАЛай!..